*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЫТЛАРИ КУН

32 (2444) [1]
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2014,
ака, 29

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

# Туянакан кĕтсех тăрать

***"Вăрман касса вир акрăм, вир акрăм..." – çапларах пуçланатчĕ ĕлĕкхи чăваш çамрăкĕсен вăйă юрри. Муркаш районĕнчи Елена Николаевна Скворцова фермерăн хуçалăхĕнче çак йĕркесем Владимир Петрович Ильинпа калаçнă чухне аса килчĕç. Кунта вир ÿстермеççĕ, анчах вăрман касса уй тăваççĕ тени чăна килет. Çĕр хĕсĕкрен фермер хуçалăхĕ 250 гектарпа пĕлсе перекетлĕ усă курать.***



Владимир Ильин

Фермера вырăнта тĕл пулма тÿр килмерĕ, анчах Владимир Петрович унăн пирвайхи пулăшуçи пулнă май сахал çĕр нумай чуна тăрантарнине тĕслĕхсемпе ĕнентерчĕ.

**– Кунта пушă выртакан çĕр юлманнине ăнлантăм эпĕ. Çамрăк йывăç хунавĕсен айне пулнă лаптăксене "ĕçлеттеретĕр". Хуçалăха аталантарма çĕр чăнахах çитет-и?**

– 250 гектар çинче эпир тыră, пахча çимĕç, çĕр улми çитĕнтеретпĕр. Пухса илнĕ тухăç сыснасене çитерме те, сурăхсене апатлантарма та, хурсемпе кăркасем валли те çитет. Тыră халăха сутмалăх та юлать. Пирĕн тăрăхра усăсăр выртакан çĕр кукăрĕ тупаймастăн. Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан нумай ачаллă çемьесем валли районта 125 гектар çĕр уйăрчĕç. Мĕн пуррипе çырлахатпăр, вăрман касса уй тăватпăр.

**– Сахал çĕр çинче пуян тухăç илме вĕренсе çитнĕ пулĕ.**

– Пирĕн çĕрсем çинчен гектартан 30-шар центнер тыră илейместĕн паллах. Анчах çирĕм е унран ытларах тухать. Çĕр улми – ик çĕр центнер. Кăçал çурхисене 150 гектар акатпăр. Кĕрхи 50 гектар çинче чипер хĕл каçнăн туйăнать. Тепĕр 50 гектарĕ канать. Вырăх апачĕ валли нумай çул ÿсекен курăк пур.

**– Тĕрлĕ вырăх тĕрлĕ еннелле туртать. Çакă йывăрлăх, тăкак ытларах кÿмест-и?**

– Аптăрамастпăр. 2007 çулта ĕçлесе кайрĕ Елена Николаевна Скворцован хуçалăхĕ. Малтан вăл "Гея" тулли мар яваплă пĕрлешÿччĕ. Кăçалтан хресчен хуçалăхĕ пулса тăчĕ. Йĕркеленсе кайсанах çĕнĕ ферма çĕклерĕ фермер. Ăратлă сыснасем илсе килчĕ. Паян фермăра – 300 пуç. Вĕсем хамăр туса илекен апатпа кăна çитĕнеççĕ. Экологи тĕлĕ-шĕнчен таса чĕр тавара вырнаçтарма йывăр мар. Пирĕн сысна какайне хаваспах туянаççĕ. Унăн сутăн хакĕ ÿсессе чăтăмсăррăн кĕтетпĕр. Ку хуçалăха малалла аталанма пулăшĕ.

Пиллĕкмĕш çул ăратлă хур (300 пуç) ĕрчетсе сутатпăр. Шупашкар пасарĕнче вĕсене туянакансем пире кĕтсех тăраççĕ. Сутма кунсерен çирĕме яхăн пуç илсе тухнă.

Кăркка та 100 пуç таран тытнă. Вунă килона çитерсен сутнă. Какайĕ усăллă çеç мар, тупăшлă та. Пĕр килограмĕ 250 тенкĕпе сутăнать.

Ăратлă сурăх усратпăр. Хальлĕхе вĕсем 55 пуç.

**– Фермер хуçалăхне куçрăр пулсан, тен, ĕне вырăх усрама та май тупăнĕ.**

– Усраса пăхасшăн. Пĕчĕкрен пуçлас терĕмĕр. Вицĕ пуç ăратлă тына туяннă та ĕнтĕ. Пăрулаттарасшăн. Ара, сĕт хамăрăн пулни аванçке. Вăл сысна çурисене кирлĕ.

**– Сахал çĕрпе типтерлĕ ĕçлесе пыратăр. Ертÿçи те çавнашкал пулĕ.**

– Скворцова Елена Николаевна – маттур хĕрарăм. Мускава качча кайсан тепри ялта хÿрине те кăтартмасть. Вăл ав яла таврăннă та çĕр ĕçне кулĕннĕ. Çемйипе Шомикре пурăнать. Ялта ÿссе çитĕннĕскере çĕр çинче ĕçлеме килĕшет. Пултаруллă. Пĕлтĕр тыră вырмалли комбайн туянчĕ. Кăçал техника паркне утă пресламалли хатĕрпе, тиемелли агрегатпа пуянлатрĕ. Çĕнĕ трактор та илесшĕн.

Хуçалăхра ытларах çамрăксем ĕçлеççĕ. Ялта урăх ĕç тупаймăн. Юрать Елена Николаевна пеккисем ял хуçалăхне çĕнĕрен вăй илтерме тăрăшаççĕ.

**Ирина НИКИТИНА.**
**Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ÿкерчĕкĕ.**

# Сăваплă тăрăхра

**Ака уйăхĕн 23-мĕшĕнче Чăваш наци конгресĕн Президенчĕ Николай Федорович Угаслов ертсе пынă делегаци пирĕншĕн сăваплă тăрăха – Тутарстанри Теччĕ районĕнчи Кăнна Кушкине – çитсе килчĕ.**

Çакăнта пурнăçăн анлă сукмакне тухнă аслă вĕрентекенĕмĕр Иван Яковлевич Яковлев ялĕ хăнасене çурхи чĕрĕлĕхпе, чăваш таравтлăхĕпе кĕтсе илнинчен тĕлĕнмелли çук. Делегаци йышĕнче конгресс вице-президенчĕсем В.Л.Клементьев, К.Г.Яковлев, ЧР культура, вĕрентÿ министерствисен яваплă çыннисем, паллă ăсчахсемпе çыравçăсем пулчĕç.

Чăваш халăхне çутта кăларакан̆ĕн бронза палăкĕ умĕнче савăнăçлă митинг иртрĕ. Ăна Кăнна Кушки ял тăрăхĕн ертÿçи Сергей Гаврилов усрĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Ильдар Фаткулов салам сăмахĕ каларĕ.

– Патриарх умĕнчи пысăк яваплăха туятпăр эпир, – терĕ Николай Угаслов. – Çавăнпа ял пурнăçне, Иван Яковлевич шкулне çĕнĕ варкăш вĕрсе кĕртес тĕллевпе "çавра сĕтел" ирттерме шухăшларăмăр. Ырă та пархатарлă ĕçсене конгресс тÿпи тĕп вырăнта пулмалла.

Вун ултă çул каялла усăлнă Яковлев музейне мăнаçланса кĕретĕн. Кашни япала санпа калаçнăн туйăнать. Пирĕн Çутта кăларуçăн çурчĕ вырăнĕнче часавай лартнă, унта та чĕрĕ чечексем хучĕç. Асăну мемориалĕнче кунта çут тĕнчене килнĕ Иоаким Максимов-Кошкинский, Чăваш халăх поэчĕ Александр Алка, Тихăн Петĕркки çыравçă, Александр Тимпай сăвăç, Анна Казакова тата ытти паллă çынсен сăнĕсем умĕнче пуç тайрăмăр.

Акан 25-мĕшĕнче, Чăваш чĕлхин уявĕнче, Иван Яковлевич Яковлев çуралнă кун, Пушкăртстан чăвашĕсен III съезчĕ иртрĕ. Ун ĕçне чăваш делегацийĕ те хутшăнчĕ.

**Вячеслав ГРИГОРЬЕВ.**

КĔСКЕН

## Патшалăх пулăшăвĕ çитет

Чăваш Республикин агропромышленноçне пулăшма патшалăхран 2 млрд тенкĕ пама палăртнă (2013 çулхи висен 120 проценчĕ). Ака уйăхĕн 25-мĕшĕ тĕлне ял хуçалăх предприятийĕсене 667,2 млн тенкĕлĕх субсиди куçарнă. Çав шутра федераци бюджетĕнчен – 483,1 млн, республика хыснинчен – 184,1 млн тенкĕ.

Хуçалăхсем патшалăх пулăшăвне кредитсен процентне саплаштарма, ăратлă ĕне вырăхшăн, акмалли паха вăрлăх туянма, çĕр пулăхлăхне ÿстерме, страхлав премийĕ тÿлеме тата ыттишĕн илеç.

## Ĕç хĕрсе пырать

Эрне пуçланнă тĕле республикăра пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене 61 пин ытла гектар акнă.

Вăрнар, Комсомольски, Патăрьел районĕсенче планпа пăхнин çуррине акнă та ĕнтĕ. Кунне вăтамран 7,6 пин гектар çĕре вăрлăх варăнать.

Патăрьел районĕнчи "Звезда" пĕрлешÿре, Ш. Куликов фермер хуçалăхĕнче çурхи акана вĕçленĕ. Пăрачкаври А. Васильев, Е. Васильева, Шăмăршă районĕнчи М. Алексеев фермерсем те палăртнине пурнăçланă. Пысăк предприятисенчен "Батыревский" пĕрлешĕве малтисен шутне кĕртмелле.

Уйрăм районсенче çĕр улми, пахча çимĕç лартаççĕ, сахăр кăшманĕ (Патăрьел районĕнче), рапс (Патăрьелпе Комсомольскире), горчица (Пăрачкавпа Етĕрнере), пĕр тата нумай çул ÿсекен курăк акаççĕ.

## Укçа уйăрнă

Яллă территорисене 2014-2017 çулсенче тата 2020 çулччենхи тапхăрта çирĕп аталантармалли тĕллевлĕ программа çамрăк çемьесемпе специалистсен пурăнмалли условийĕсене лайăхлатма май парать. Патшалăх пулăшнипе яш-кĕрĕм ялта çурт тума е туянма пултарать.

Кăçал çак программăна пурнăçлама федераци тата республика бюджетĕнчен 145208 пин тенкĕ уйăраççĕ. Апла ялта пурăнакан 205 çемье, çав шутра 115 çамрăк çемьепе специалист, хăтлă хваттере е çурта куçĕ.

2010 çултанпа патшалăхăн социаллă тÿлевне агропромышленноçра тăрăшакан е ялта çак тытăмпа çыхăннă предприниматель ĕçĕпе пурăнакансем илеççĕ. 2014 çултан çамрăк çемьесемпе специалистсен те кун пек ирĕк пур. Вицĕ е ытларах ачаллă çемьесене чи малтан пулăшаççĕ.

## Васкамалла

Уйрăм кил-çурта харпăрлăха çăмăл майпа çырма юлашки çулсенче халăха "дача амнистийĕ" аван пулăшрĕ. Яваплă ĕçе пурнăçлама ĕлкĕрейменнисен васкамалла. 2015 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕччен кăна ăна малтанхи майпа тума пулать. Кайран пурăнмалли çурта харпăрлăха илесси кăткăсланать: çурта хута яма ирĕк илме тивĕ. Куна валли нумай хут пуçтармалла. Çакăн çинчен Росреестрăн Чăваш Республикинчи управленийĕ пĕлтерет.

Çĕр лаптăкне урăх тĕллев валли илнĕ пулсан, ăна харпăрлăха кирек хăш вăхăтра та çырма май пур. Уншăн ятарлă срок палăртман.

ÇЫРĂНТАРУ-2014

ХЫПАР

**Вăхăтра çырăнăр – «Хыпарлă» пулăр!**

| Индекс | Кăларăмсем | Çырăнтару хакĕ |
|---|---|---|
| 54800 | Хыпар | 744-12 |
| 78353 | Хыпар-шăмат кун | 321-96 |

ХРЕСЧЕН САССИ

| Индекс | Кăларăмсем | Çырăнтару хакĕ |
|---|---|---|
| 54838 | Хресчен сасси | 379-80 |
| 43887 | Хресчен сасси-Кил | 192-66 |

**Тăлăх çынпа пĕр «Хресчен сассисĕр» кил. Ватти-вĕтти, яш-кĕрĕм, Васка, çырăнса ил!**

**Инçетри ял сасси**

# Чулкаçа çерем пусса илĕ-ши?





Хисеплĕ вулаканăм, эсĕ тăван ял историне пĕлетĕн-и? Çук пулсан Вăрнар районĕнчи Чулкаçсенчен тĕслĕх илме сĕнетĕп. Пысăк, чаплă, хăтлă ялта пурăнмаççĕ вĕсем. Вун икĕ çуртран çиччĕшĕнче кăна хĕлле мăрьерен тĕтĕм йăсăрланнине куратăн. Ыттисем – çурма чĕрĕ: пӳрт-çурчĕсем сăнран пăхсан тайăлса "ватăлнă", анчах çулласерен пахчисенче армути ешермест, унта çиме юрăхлă ӳсен-тăранах çитĕнет. Пӳрнепе тĕллесе тенĕн вăл е ку çурт хапхинчен пырса шаккатăп. Ял çинчен калаçнăçемĕн çамрăкки те, ватти те вăл епле пулса кайнине аса илет. Хăйсем пурăнакан вырăна ял тенине ӳстеререх калани пек йышăнаççĕ. "Ял мар, Çăкаллă Явăш урамĕ вăл. Чăн Чулкаçĕ Элĕк районĕнче", – ĕнентереççĕ мана. Тĕрĕсех-мĕн. Вăрнарти Чулкаç чылайчен уйрăм ял шутланнă. Халĕ кӳршĕри Явăшăн урамĕ пулса тăнă.

Элĕкри Чулкаçра кулак ятне илтнисем çакăнта килсе тĕпленнĕ имĕш. "Кулакĕсем тăваттăн пулнă, ыттисем хăйсен ирĕкĕпе куçса килнĕ ку çĕр çине", – ăнлантарать 76 çулти Геннадий Порфирьевич Порфирьев.

Унăн сăмахĕсем тăрăх – ватăсен пурнăçĕ патшалăх вĕсем çине епле пăхнипе çыхăннă. Пенсие вăхăтра тӳлени çырлахтарать. Ялта лавкка, культура çурчĕ, фельдшерпа акушер пункчĕ пулманни пач та вăрçтармасть, хирĕçтермест. Кашнин килĕнче тараса, çут çанталăк газĕ пур. Порфирьевсем кăмакана вутăпа хутса ăшăтаççĕ. Газ кĕртесси çинчен шухăшланă вĕсем. Анчах хăйсем çĕре кĕрсен кам килсе пурăнĕ тенĕ те шухăша пăрахăçланă. Виçĕ ачи хулара йăва çавăрнă. Ял пурнăçĕ илĕртмест вĕсене. "Çĕр улми кирлĕ пулсан килеççĕ", – мучи те шӳтлесе, те чăнласа каланине малтанах уйăраймарăм эпĕ. Яла ямăттине илме кăна çӳремеççĕ-мĕн. Пахча çимĕçне лартма та, кăларма та пулăшаççĕ. Çавах тăван ял вĕсемшĕн инçетре тăрать.

"Тепĕр вунă çултан-и? Çăкаллă Явăш та (унта 100 ытла кил) пĕтĕ. Унта та паян çур ял пушă. Тепĕр аллă çултан вара пирĕн ял вырăнне çерем пусса илĕ", – хальхинче шӳтлемесĕр хуравлать мана ялти чи аслă ватă.

Çакна мĕнпе хирĕçлĕн? Сăлтав çук. Ыранхи ӳкерчĕке сăрă ăсти мар, пурнăç пурăнса курнă çын сăнлать-çке.

27-ри Виталий Романов хальлĕхе ялта ашшĕ-амăшĕн килĕнче. Тинтерех Мускавран ĕçлесе таврăннă. Çемьери виçĕ ачаран аслăраххи ялта юласси пирки татса калаймасть. Шухă çамрăкăн шухăшĕ вылянать. Акă кӳршĕ ялти юлташĕ ситрĕ ун патне. Пирĕн калаçăва итлесен: "Хулара мĕн çухатнă эсĕ? Мана унта пурăнма пач килĕшмест", – терĕ. Виталие вара çывăх вăхăтра Шупашкара ĕçе чĕннĕ-мĕн, çавăнпа вăл тарăн шухăшра. Çавах та ялти пурнăçа хурламасть каччă. Уншăн кунта лайăх, кирли пĕтĕмпех пур. "Тăхта-ха, – тетĕп ăна. – Юрать яла асфальт çул илсе çитерет, килте çут çанталăк газĕ çунать, ал-урана, чуна кантарма урăх нимĕн те çук-çке". "Клуб темскер мар, çухрăмри яла кайса килме пулать. Таварпа автолавкка килет. Фельдшер пункчĕ те юнашар ялта. Çулла ăçта канма вăхăт тупăнтăр! Пахчара ĕçлемелле", – çийĕнчех хуравларĕ вăл. Çĕрĕ чăнах та чылай-мĕн – 5 гектар таранах. Ĕни те темиçе пуç, сурăхсем, ытти выльăх пур. Кĕтӳ кĕтсе пайтах нушаланнă. Пĕчĕк ялта выльăхĕ йышсăр пулнăран черет пит час çитнĕ. Халĕ Чулкаçсем кĕтĕве Çăкаллă Явăшăн тепĕр урамĕнчипе пĕрлештернĕ те ун пекех асаплă мар.

Романовсемпе юнашар Ивановсем (вĕсен аслă ывăлĕ Виталипе пĕр çулаллахи) икĕ хутлă чаплă çурт (кун пекки ялта пĕрре) туса лартнă. Хĕлĕн-çăвĕнех пурăнаççĕ. Вĕсене кура, тен, Виталие те ял туртса илĕ. Паллах, Чулкаçра пурăнма килĕшекен арăм тупсан. Пĕр шухăшли тупăймасан вара (ялта 2-3 çамрăк кăна) Геннадий Порфирьевич каланă пек яла çур ĕмĕртен çерем пусса илме те пултарĕ. Пысăк вăрмансем çук ку таврара. Ĕлĕкрех 50 çухрăмри Мăшавăш вăрманне лашапа çӳренĕ. Ял пĕтсен те çĕре çут çанталăк пĕтме памĕ. Чулкаç, тен, вăрманпа та витĕнĕ.

**Ирина НИКИТИНА.**



Сăн ӳкерчĕкĕсем авторăн

**ÇĔНĔ ЯЛ – ÇĔНĔ ШАЙ**





С. ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕсем

# Чăннипех чĕртесшĕн

**Чылай ялăн сывлăхĕ хавшаккине пытармăпăр. Ĕçкĕпе иртĕхекенсемпе вăл сывă пулаймĕ. "Маншăн ик айкки те – тăвайкки" шухăшлавпа та мала каяймĕ. Ĕлĕкхине аса илтерни те ăс-тăна витермест. Чĕрĕлĕх кĕртме витĕмлĕ тĕслĕх кирлĕ. Ыран, тепĕр кун мар, халĕ – шăпах çак самантра. Шупашкар районĕнчи Атăльялри пек.**

Хальччен вăл пуçарулла та пултарулла çынсемсĕр пурăнман паллах. Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ агрономĕ Леонид Федорович Фадеев ячĕ мĕне тăрать! Çĕр ĕçченĕ илемлĕ сăвăсем хайлать, тăван ял историне çырать. Ăста художниксем те кунта пĕрре мар. Хăйсен юрри-ташшипе халăха савăнтаракан ĕçченсем ырми-канми тăрăшаççĕ. Вĕсенчен пĕрипе Тамара Григорьевна Шаплинăпа (хĕр чухнехи хушамачĕ Ильмендерова) тĕл пултăмăр та вăл лара-тăра пĕлменнинчен тĕлĕнтĕмĕр. Тепĕр икĕ уйăхран 70 çул тултараканскер пăрчăкан пек вăр-вар. Калаçăвĕпе юрă юрлать тейĕн, таса çăл куç сасси пек юхаççĕ сăмахĕсем. Ахальтен мар-мĕн: юрăçа вĕренмен пулсан та яланах юрланă вăл – агрегат заводĕнче те, троллейбус управленийĕнче те. Халĕ ялти клуба çӳрет, кӳршĕри Муркаш районĕнчи Шомикри Культура çуртне те ĕлкĕрет. Килĕнче те юрла-юрла ĕçлет, çулла юрăпах вăрмана кăмпана чупать. Вунă çул çапла тăван ял пурнăçĕпе йăпанать. "Хулана кайса пурăн тесен те – каймастăп. Унта çĕр выртма та юлас килмест", – тет Тамара Григорьевна.

Вырăнти çыннăн ырă тĕслĕхĕ ыттисемшĕн çавах çителĕксĕр иккен. Ютран килсе йĕрке тăваканăн вара витĕмлĕрех. Сергей Лазаревич предприниматель пулăшнипе ял сăн-сăпачĕ çĕнелет. Тепĕр тесен, вăл Атăльялсемшĕн çич ют мар ĕнтĕ. Кунта çемйипе çурт-йĕр çавăрнăранпа тăватă çул çитет. Çак тапхăрта унăн ырăлăхĕнчен тĕлĕнме пăрахмалла пек. Çук, Тамара Григорьевна та хушăран ăна "тĕлĕнмелле çын" тет.

**– Тамара Григорьевна, мĕншĕн-ха апла калатăр? Тӳперен çăлтăр татса пачĕ-им?**

– Капла танлаштарни те вырăнлă. Ав ĕнер ăна пĕве хĕрринче куртăм. Мĕн тăват-ши тетĕп. Вăл пĕве хĕррипе усăнчăк çӳçе лартать-мĕн. Ялта вун-вун çул пурăнакансем тухмаççĕ (е кунашкалли сайра пулать), хуларан килсе тĕпленнĕскер пĕччен тăрăшать. Кăçал вăл ялта çырма хĕррипе 300 тĕп хунав лартма ĕлкĕрнĕ. Пĕлтĕр те ĕçленĕ. Тепри ун вырăнĕнче çапла тăрăшĕччĕ-ши?

**– Çут çанталăка чунпа парăннисем ытти ялсенче те пур...**

– Çавăнпа тĕлĕнмелли çук тесшĕн ĕнтĕ. Апла мар. Асăрхарăр пулĕ, çырма хĕрринчен çӳлерех хитре çурт ларать. Культура çурчĕ вăл. Уншăн Сергей Лазаревича тав тăватпăр. Юлашки вăхăтра нимĕн те пулман çав вырăнта. Пĕр уйăхра ӳссе ларчĕ çак илем. Строительство материалĕ турттарчĕ, ĕçлекенсене те хăех илсе килчĕ. Шалта та хитре халĕ. Ял пурнăçне сăнлакан стендсем йĕркелерĕмĕр, хăнасене чей ĕçтерме уйрăм пӳлĕм пур. Уявсене хатĕрленетпĕр, концертсем лартатпăр. Иккĕмĕш çул çапла киленетпĕр.

**– Çуртпа юнашар тепĕр хуралтă куратăп. Хальхи саманари хӳшше аса илтерет.**

– Ара, тата музей тăвас шухăшлă вăл. Ялти кашни йăхăн хăйĕн хӳшши пулĕ унта. Варринче – юпа. Йĕритавра карта тытса çавăрасшăн. Йĕпреç районĕнче çавнашкал музей пур тет-и? Ĕçе пĕлекен çынпа канашланă та ĕнтĕ вăл.

Пĕве пĕвеленĕ, анчах машинăпа каçма çул ансăр пек туйăннăран-ши, ĕнер ăна тимлĕ сăнарĕ. Ахăртнех, анлăлаттарĕ.

**– Пĕлсе тăнă пекех калатăр-ха.**

– Пĕлсе тăмасăр. Машинăпа иртнĕ чух урамсем хĕреслеллĕ вырăна асăрхамарăр-и? Унта ача-пăча площадки тăвасшăн. Малтан темĕн те пĕр ларатчĕ, йăлт пуçтарттарчĕ. Чуччу, ачасене выляма ытти хатĕр илсе килсе вырнаçтарать.

**– Пуçтарттарчĕ пулсан ял çыннисем итлеççĕ апла ăна.**

– Тăрăшать вĕт. Епле итлеместĕн. Мĕнлерех тăрăшать тата! Çăварни уявĕнче тунă сăн ӳкерчĕксене Культура çуртĕнче хăмăр пĕлнĕ пек вырнаçтарнăччĕ. Курчĕ те тепрехинче ятарласа хашаксем илсе килчĕ. Ӳкерчĕксем илемлĕ курăнччăр терĕ.

5-мĕш стр. ➔





# Музей шăпи кам аллинче?

**Елчĕкри историпе тăван тавралăх музейĕ Яков Павлович Беляев купса çуртĕнче вырнаçнă. Икĕ хутлăскере 1909 çулта тунă. Пĕр ĕмĕр ытла ларать пулсан та çирĕп вăл.**

### Панорама та, экспонат та

Беляевсен йăхĕ йышлă пулнă. Çичĕ пĕр тăван тулăх пурăннă. Пурте керменсем çĕкленĕ. Яков Павлович 1887 çулта çуралнă. Унăн арăмĕ Аслă Пăла Тимешри Алюновсен йăхĕнчен. Ăста çĕвĕçĕ шутланнă. Кĕперен пуçласа куртка-плащ, çĕлĕк таранах çĕленĕ. Çавăнпах ĕнтĕ ун патне таврараn та килнĕ. Кил хуçи вара вырьăх-чĕрлĕх чылай тытнă. Икĕ кĕлечĕ те тырăпа тулнă. Ăна вăл ял халăхĕнчен йÿнĕпе туяннă та Тутарстана, Чĕмпĕре хаклă хакпа кайса сутнă. Федорăн (унпа пĕр тăван) арман пулнă, теприн – çăм таптаракан машина. Тăвансем пĕр-пĕрне пулăшса пурăннă.

1992 çултанпа музей çак çуртра вырăн тупнă. Халĕ кунта 5 пин ытла экспонат упранать, вĕсене 11 уйрăма вырнаçтарнă. Пĕрремĕш хутра аваллăха сăнланă, çулран çул Елчĕк мĕнле аталанса пынине çутатнă. Çавăн пекех Аслă Таяпа хулаш вырăнĕн макечĕ, Чăваш халăх ÿнерçи Владимир Агеев хатĕрленĕ Елчĕк пасарĕн панорами те пур. Кунтах – кил-çуртри савăт-сапа, тумтир.

Иккĕмĕш хутра вăрçă хыççăнхи килçурта сăнланă кĕтес хăйне евĕр кăсăклă. Унта сĕтел-пуканран пуçласа тумтир таранах курма пулать. Курав залĕ те пур. Çулталăкра 13-15 выставка йĕркелеççĕ музей ĕçченĕсем. Ытларах вĕсем çак тăрăхра çуралса ÿснĕ çынсен пултарулăхĕпе паллаштараççĕ. Сăмахран, кунта маларах Олегпа Юрий Ксенофонтовсем ăсталанă кÿлепесен куравĕ ĕçленĕ. Юрий Иванович тимĕртен тĕрлĕ кÿлепе тунă, Олег Иванович вара тăмпа ĕçлеме юратнă. Паллă çынсем тенĕрен чылай вĕсем кунта: ÿнерçĕсем, артистсем, спортсменсем... «Эпĕ ĕçлеме пуçланă чухне районĕпе 10-20 спорт мастерĕччĕ, – тет музей ертÿçи Валентина Вастулова. – Халĕ тĕнче спорт мастерĕсем – 300 ытла. Вĕсене шута илсе пĕтерме çук».

Аслă Елчĕкре çуралса ÿснĕ Волковсен çемйине те ятарлă кĕтес уйăрнă.

### Ырă йăла

Кашни çулах кунта Пĕтĕм тĕнчери музей кунĕнче ятарлă каç ирттереççĕ. Пĕлтĕр районти хастар хĕрарăмсем пухăнса ал ĕç тунă: хăшĕ кĕнчеле арланă, теприсем пир тĕртнĕ, виççĕмĕшĕсем тĕрленĕ. Пир станокĕсене урама вырнаçтарăран иртен-çÿрен вĕсен ĕçĕпе паллашнă.

Тепĕр ырă йăла пирки асăнса хăварас килет: 15 çул ытла музейра «Чăваш тĕрри» кружок ĕçлет. Ăна Валентина Григорьевна ертсе пырать. Хăй вăхăтĕнче вăл «Паха тĕрĕ» фабрика филиалĕнче маçтăрта ĕçленĕ. Кружока ытларах 5-11 класра вĕренекен ачасем çÿреççĕ. Акă Ольга Яковлева пĕчĕкренех тĕрлеме юратнă. Шкулта вĕреннĕ вăхăтра республикăри олимпиадăсене те хутшăннă, яланах малти вырăнсене çĕнсе илнĕ. Халĕ вăл Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче вĕренет. Пушă вăхăтра йĕппе çип тытать. Чун киленĕçне алла илме пулăшнăшăн Валентина Вастулована чунран тав тăвать.

Музей кунне кăçал та кăсăклă ирттерме палăртаççĕ ĕçченсем. Хальлĕхе ăна вăрттăнлăхра тытаççĕ. Пĕр çулхине кунта фитобар йĕркеленĕ. Уява пухăннисене тĕрлĕ курăкран чей вĕретсе ĕçтернĕ. Вĕсен сиплĕхĕ çинчен каласа кăтартнă, конкурссем ирттернĕ.

Çынна явăçтарма пĕлеççĕ кунта вăй хуракансем. Штатра ертÿçĕсĕр пуçне Светлана Голубева экскурсовод пур. Вăл та тĕрлĕ енлĕ пултаруллă хĕрарăм. Ахальтен мар хăна-вĕрле тÿрех музее çул тытать. Район чысне çÿле çĕклес тесе ырми-канми тăрăшаççĕ ĕçченсем. Анчах та чуна ыраттаракан ыйтусем те пурах. Кивĕ çурта юсасах тăмалла е сăрласа илемлетмелле. Çакăн валли вара никам та ятарласа укçа уйăрмасть. Хальччен спонсорсем пулăшăвĕпе пурăннă вĕсем. «Юрать çĕр çинче ырă çынсем пур. Тавах вĕсене, – терĕ ертÿçĕ. – Сăрă кирлĕ пулсан сутуçăсем патне чупатăп».

Сăмах ыйтма кивçене кĕмест Валентина Григорьевна. Пуринпе те пĕр чĕлхе тупать вăл. Çавăнпа кăмăллаççĕ те ăна. Чĕлхе-çăвар вара Мускава та çитерет, музейра юсав ĕçĕсене тума та пулăшать.

# Вулавăш сукмакĕ



«Кĕнеке – пурнăç çăл куçĕ», – тетпĕр пулсан та халĕ унпа çынна илĕртеймĕн. Çамрăксене пушшех те. Ахальтен мар ĕнтĕ Вера Леонтьева библиотекарь ял халăхĕпе çыхăну тытма урăх мел шухăшласа тупнă. Вулавăш çумĕнчех ача-пăча валли «Çут çанталăк тусĕсем» экологи тата хĕрарăмсен клубĕсем ĕçлеççĕ. Вĕсене Вера Николаевна хăй ертсе пырать. Ачасемпе вăйăсем ирттереççĕ, кĕнекесемпе паллашаççĕ пулсан аслисемпе уявсем, тĕл пулусемпе калаçусем йĕркелеççĕ. Акă Чупай ял тăрăхĕнче Ангелина Павловская çыравçă хăнара пулнă. Ял çынни унăн хайлавĕсене питĕ килĕштернине пĕлтерчĕ библиотекарь. «Кĕнекисем пĕрмаях – алăра. Вулавăша таврăнмаççĕ те. Пĕри вуласан тÿрех теприне куçать», – терĕ Вера Леонтьева. Çавăн пекех вулакансем Нелли Петровская, Улькка Элменĕ, Сергей Павлов тата Николай Симунов çыравçăсен хайлавĕсене килĕштернине палăртрĕ вăл. Ятарлă темăсемпе калаçнă чух вырăнти ФАП ертÿçине Светлана Васильевăна, районти историпе тăван тавралăх музейĕн директорне Василий Цыфаркина, ял тăрăхĕн специалистне Надежда Ивановăна тĕл пулăва чĕнет.

«Çакнашкал мероприятисем ирттермесен ман пата килекен çук», – пăшăрханарах пĕлтерчĕ вăл. Хаçат-журналпа та паллаштарма тăрăшать. Хĕрарăмсене ытларах ал ĕç тата апат-çимĕç журналĕсем килĕшеççĕ, ачасене – «Самант», «Тетте». Çапах та вĕсем вырăсла вулама кăмăлланине палăртрĕ Вера Николаевна. Чăвашла ăнланманран калаçăва ачасемпе вырăсла-чăвашла ирттереççĕ. Кун пирки ял тăрăхĕнче те, шкулта та сăмах пуçартăм. Чăваш ялĕнче ачасем вырăсла калаçса çитĕннине никам та пытармарĕ. «Çамрăксем унта-кунта ĕçлеме кайсан вырăс майрасем çаклатса килеççĕ. Каярахпа ачисене те вырăсла вĕрентеççĕ», – терĕç. Унсăр пуçне чукун çул çывăхра пулни те витĕм кÿрет пулĕ. Мĕншĕн тесен ытларахăшĕ ют хуласенче ĕçлесе пурăнать.

Библиотека фондĕнче паян 7,5 пин кĕнеке. Иртнĕ çул 650 вулакан шутланнă. Вĕсенчен чи ватти – Александра Семенова. Сакăр теçеткене парăнтарнă хĕрарăм халĕ те кĕнекесĕр пурăнаймасть иккен. Вулавăша çÿреймест вăл. Кĕнекепе ăна хĕрĕ тивĕçтерет.

Чи çамрăк вулакансем – 5 çулти шăпăрлансем. Вĕсем ялти «Хĕвелпи» ача садне çÿреççĕ. Час-часах кунта экскурсире пулаççĕ. Ачасене пĕчĕкрен кĕнекене юратма вĕрентеççĕ воспитательсем. Библиотекарь каланă тăрăх – кĕçĕн класра вĕренекенсем кĕнекепе туслă. Аслă класа куçсан ун пирки пачах манаççĕ вĕсем. «Вулама кăна мар, урама тухма та пăрахаççĕ ачасем. Кунĕпех компьютер умĕнче лараççĕ», – терĕ вăл.

Вулавăш хаçат-журнал çырăннипе кăсăклантăм. «Хыпар» Издательство çурчĕ кăларакан пур кăларăм та пур кунта. Кун пек тĕслĕхе республикăри библиотекăсенче сайра асăрхатăн.

Вера Николаевна та вулама юратать. Малтанах кăларăмсене хăй алла илет, кайран ыттисене паллаштарать.

Ял халăхне хăй енне çавăрма пĕлет вăл. Ахальтен-и вулавăшран çын татăлмасть. Килен-каяна тараватран хисеплеççĕ ăна. Тен, çавăнпах унта çитерекен сукмак та курăкпа витĕнмест.

**Вăрмар районĕ.**

**Кăларăма Валентина ПЕТРОВА хатĕрленĕ.**

## Этем тата çут çанталăк

# Зойка вăрманĕ

***Ял çинче пĕрре мар илтнĕ çак сăмахсене. Ытларах ватă çынсем калатчĕç: «Зойка вăрманĕнче речĕ-речĕпе кăмпа larать, хăть çавапа çул». «Зойка хурăнлăхĕнче мунча кĕме милĕк хуçасшăнччĕ – пулмарĕ. Вăрман çамрăк, юрамасть терĕç вĕренекенсем»... Хам та вăрман вăрманах тенĕ те Зойки пирки шухăшласах та кайман.***

***Икĕ пинĕмĕш çулсен пуçламăшĕнче Туканашри сакăр çул вĕренмелли шкул директорĕпе Павел Александрович Александровпа Куславккаран Хусан-Чул хула çулĕпе яла таврăнатпăр. Çу кунĕ, ытла шăрăх мар, тӳпере пĕр пĕлĕт татăкĕ курăнмасть. Павел Александрович «УАЗ» рульне çăмăллăн çавăркаласа пырать. Пăрмас кĕперĕ çывăхĕнче машинăна карт! чарса тăратрĕ.***

### Хурăн рашчи – мăшăрланма

– Пăх-ха сылтăмалла, – пуçне сĕлтрĕ аслă юлташ. – Епле хитре Зойка вăрманĕ. Куç умĕнче ӳсse сарăлчĕ. Атя, кайса уçăлса çӳрер-ха. Хутаç ил кăмпа татма.

– Мĕнле Зойка вăрманĕ? – чăтаймасăр ыйтрăм эпĕ. – Мĕншĕн çапла ят панă-ши?

Павел Александрович шалт тĕлĕнсе кайрĕ.

– Пирĕн биолог – Зоя Витальевна Платонова, – тӳлеккĕн ăнлантарчĕ вăл, – Ватнерсем-çке. Шкул лесничествине ертсе пырать. Питĕ пуçаруллă.

Çирĕм çул ытла Шупашкарта пурăнатăп та, тавçăрса илеймен вĕт! Районти çут ĕç пайĕнче Туканашри шкул лесничестви çинчен мухтаса калаçрĕç. Ăна 1971 çулта йĕркеленĕ. Çирĕм пилĕк çул хушшинче 54 гектар çине 484759 йывăçпа тĕм лартса хăварнă. Халĕ лесничествăна 472 гектар вăрман шанса панă. Вун пĕр квартал çинче çамрăк лесниксем 43 кăткă йăви шута илнĕ, çĕнĕрен 220 йăва куçарса лартнă. Шăнкăрчсемпе ытти кайăксем валли 4123 вĕлле туса çакнă. Çуллен «Йĕкел», «Палан», «Пилеш», «Çăка», «Хыр йĕкелĕ», «Шăлан» операцисем иртнернĕ, çĕршер килограмм йывăçпа тĕм вăрри пухнă. Мĕн чухлĕ ĕç пурнăçланă çамрăк ăру! Кашни шкул çавнашкал ĕçлесен эпир тахçанах тайгара пурăнмалла...

Çырмана антăмăр. Унăн ячĕ те пысăк поэзиллĕ: Тĕлнер. Çемçереххĕн калатпăр та «тĕлĕнтер» тенĕ пекех илтĕнет. Илемлĕ ят унăн пĕтĕм ырлăхне палăртать тейĕн. Шывĕ тăрă, кĕренреххĕн курăнать. Вырăнĕ-вырăнĕпе çурхи шывпа юхса аннă хыт хурапа патактурат куписем пӳлĕне-пӳлĕне тăраççĕ. Хулăнрах туратсем, ятарласа пĕвеленĕ евĕр, шыва урлă выртнă. Çак ăпăр-тапăр çине çамрăк вĕлтрен шăтса тухнă.

Юхан шывăн икĕ айккипе хăвасемпе шур тирексем пĕчĕкçеçĕ хумсен кĕввине итлесе чĕмсĕррĕн лараççĕ. Юхан шыв урлă икĕ йывăç хурса касма тунă.

Сăртра – хурăнлăхпа хыр вăрманĕ. Йывăçсем çирĕм çултан иртнĕ пулас. Шăплăх. Хутран-ситрен çеç: «Фю-фю, ч¸-чо-чо!» – юхать шăпчăк сасси. Тавралăх çĕнĕ пылпа сывлать тейĕн.

«Хыр вăрманĕ – савăнма, хурăн рашчи – мăшăрланма», – теççĕ Туканаш-Ватнер çыннисем. Павел Александрович пĕр сăмахсăрах хурăнлăха ертсе кĕчĕ. Кунти тĕнче çапсутă. Хурăн çулçисем çĕрнипе пулнă çемçе тăпра çинче тĕрлĕ тĕслĕ курăк курăнать. Пĕр шĕшкĕ тĕмми айĕнче кăткă йăви ларать. Самай пысăкскер. Лара-тăра пĕлмест ĕçчен чĕр чун! Пурте чупкалаççĕ, тем сĕтĕреççĕ. Купа тавра хитре чечексем ӳсеççĕ. Çулçисем – йĕпкĕн симĕс.

### Кашнине пĕрмене хумаççĕ

– Кăткă йăвине пирĕн вĕренекенсем михĕпе çĕклесе куçарса лартнă, – ăнлантарма пуçларĕ Павел Александрович. – Чечекĕсене вара кăткăсем акса ӳстернĕ. Питĕ кăсăклă ĕç. Ученăйсем çакна тупса палăртнă: вăрманти хăш-пĕр чечек çумне хушкăм ӳссе ларатьмĕн. Вăл тутă тытакан тутлă çупа пуян. Çакă кăткăшăн питĕ илĕртӳллĕ апат. Вăрă хуппи хытă пулнăран вĕсем ăна çĕмĕреймеççĕ. Тутлă хушкăмпа пĕрле чечек вăррине те йăвана сĕтĕрсе кĕреççĕ. Хамăн çак пĕртте йывăр мар тесе ахаль каламаççĕ вĕт. Тутлă апат хăвăрт пĕтет. Кăткăсем хăйсем пурăнакан вырăна час-часах тасатаççĕ. Тĕрлĕ çӳп-çаппа пĕрле вăрăсене те кăларса пăрахаççĕ. Вĕсем вара кăткă йăви тавра шăкăрин шăтса тухаççĕ. Кусем – пыл курăкĕ, çĕлен куçĕ, вăрман алпастă курăкĕ, çеçпĕл, шĕпĕн курăкĕ, вăрман паранки... Кăткăсен çемйи çу каçа йăвари нӳхрепе хĕрĕх пине яхăн тĕрлĕ вăрă сĕтĕрсе кĕрет...

Тем те пĕлет шкул директорĕ-биолог, ăна итленĕçемĕн итлес килет. Эпĕ кĕтмен çĕртен сарă кăрăç тупса татсан, вăл питĕ савăнчĕ. «Кашни кăмпанах алăпа тытаççĕ, анчах пурне те пĕрмене хумаççĕ», – терĕ кăмăллăн.

Хĕвел питтинче асамат кĕперĕ карăннă чечеклĕ уçланкăна пырса тухрăмăр. Павел Александрович каллех шкулти лесниксем пирки сăмах пуçларĕ:

– Аслă çулăн леш енче, сăрт хысĕнче, республика пĕлтерĕшлĕ «Пăрмасри çеçен хир тайлăмĕ» ботаника заказникĕ мăнаçлăн сарăлса ларать. Ăна та Зойка вăрманĕ теççĕ. 55 гектар. 28 гектарне пирĕн ачасем лартса ӳстернĕ. Паллах, Зоя Витальевнăпа пĕрле пур çĕрте те пуçламăш классене вĕрентекен Елизавета Викторовна Толстовăпа Юлия Ивановна Кондратьева, физкультурăпа вĕрентекен Михаил Александрович Андреев тата ытти учитель хастар хутшăннă çак ĕçе. Ку – чăн-чăн паттăрлăх, тăван çут çанталăкшăн ырми-канми кĕрешни.

Заказникра сарă чăпăл курăкĕ, тĕклĕ кăлкан, кушак курăкĕ, икĕ çулçăллă любка – пĕтĕмпе 18 тĕрлĕ эмел курăкĕ ӳсет. Шкулта ятарласа «Хĕрлĕ кĕнеке» тунă. Çамрăк лесниксем заказник çĕрне тирпейлесе тăраççĕ, кунти йывăç-курăка хăйсемех хуралласçĕ, сайра тĕл пулакан ӳсен-тăрана тĕпчеççĕ. 2002 çулта Зоя Витальевна хĕрĕ – Настя «Ӳсентăрансен экологийĕ» темăпа республикăри наукăпа практика конференцине хутшăнса виççĕмĕш вырăн йышăнчĕ, шкул лесничестvolsство та çĕнтерӳçĕсен шутне кĕчĕ.

Шкулта 100 тăваткал метрлă теплица пур. Питомникра 100 маньжури мăйăрĕ, 500 йĕкел, 2 пин шурă акаци вăрри, 2 пин улмуççи лартса хăвартăмăр. Юлашки çулсенче кăна Туканашпа Ватнер çывăхĕнчи 50 çырмара 150 пин йывăç симĕс тум тăхăнчĕ. Ĕçлет, çанă тавăрса тăрăшать çамрăк халăх...

Чăн та, тĕлĕнмелле хастарлăх, иксĕлми патварлăх, çĕкленӳллĕ пуçарулăх. Çавăнпа куç тулли илем Зойка вăрманĕнче. Ку – вĕрентекенсемпе вĕренекенсен пĕрлешӳллĕ чун киленĕçĕ.

Акă шап-шурă хурăнсен айĕнчи хĕвеллĕ уçланкă варринче речĕ-речĕпе утă çулакан хĕрсен тутăрĕсене аса илтерекен кăмпасем лараççĕ. Яка кăмпасем: хĕрлисем, шуррисем, саррисем, кĕреннисем... Павел Александрович мана хулăран тытрĕ.

– Ан васка-ха, – терĕ вăл йăвашшăн. – Пăхсам, патрак яка кăмпа, тĕссĕррисемпе кăвакkисем çук-ха. Вĕсем тепĕр уйăхран, Сăпас тĕлне шăтса тухаççĕ...

Кăмпасен шлепкисем чей чашкисем евĕр. Çумăр шывне, ирхи сывлăма пухаççĕ. Пурте ырă шăршăллă. Эпир вĕсене пуçа çĕклемесĕр татрăмăр, хутаçа тӳпеми тултартăмăр. Унтан хыр вăрманне кĕрсе çаврăнтăмăр.

– Ну, халĕ кама тав тумалла? – ыйтатăп аслă юлташран.

– Зоя Витальевнăна, – татăклăн каларĕ Павел Александрович. – Тĕлнер сăртне симĕс тум айне тума вăл сĕннĕ. Халĕ акă мĕн тери ырă вăрман савăнăçĕ.



Зоя Платонова

### Пĕр салтакăн çĕр алă, пĕр ура

Зоя Платонова çӳллĕ мар, тăпăл-тăпăл та хитре хĕрарăм. 1951 çулхи кăрлач уйăхĕн 6-мĕшĕнче Ватнерте çуралнă. Ашшĕ, Виталий Николаевич Наумов, Тĕрлемес совхозĕнче счетоводра ĕçленĕ. Амăшĕ, Серафима Алексеевна, уй-хир ĕçĕнче, сысна ферминче вăй хунă. Çемьере Игорь шăллĕпе ӳснĕ. Вăрман çумĕнче пурăнатпăр, ырлăх-пурлăхпа савăнатпăр теççĕ-и-ха? Ачасем çырлана çӳренĕ, мăйăр татнă, кăмпа пухнă. Зоя Туканашри сакăр çул вĕренмелли шкултан питĕ лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă. Вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен Ксения Матвеевна Александровăна юратнăран учитель пулма ĕмĕтленнĕ. Тĕрлемесри вăтам шкулта пĕлӳ илнĕ хыççăн И.Я.Яковлев ячĕллĕ чăваш патшалăх педагогика институтне çул тытнă. Шел, ялти шкулта ют чĕлхе вĕренмен пирки (учителĕ пулман) вĕренме кĕреймен.

Чунри йывăрлăха пăхмасăр Зоя Витальевна Шупашкарти 1-мĕш профессипе техника училищинчен вĕренсе тухать. Хулари электровиçев приборĕсен заводĕнче слесарь-сборщикра, чăлхапа трикотаж фабрикинче вязальщицăра ĕçлет. Çут çанталăка юратнăран пединститутри биологи факультетне вĕренме кĕме шутлать. Икĕ çул умлăн хыçлăн экзаменсен тытать, конкурс витĕр ниепле те тухаймасть. 1973 çулта тин ĕмĕчĕ пурнăçланать – вĕренме кĕрет.

Виççĕмĕш курс хыççăн вăл Туканашри шкула курма пырать.

– Шкулти çĕнĕлĕхсем мана питĕ килĕшрĕç, – аса илет халĕ Зоя Витальевна. – Шкул пĕтĕмĕшпех кабинет йĕркипе ĕçлеме пуçланă. Кашни пӳлĕмре телевизор, кино кăтартмалли аппарат пур, вĕрентӳре усă курмалли техника хатĕрĕ нумай. Физика, биологи, хими тата истори кабинечĕсем валли кăтартса вĕрентмелли хатĕрсем кӳрсе килнĕ. Картишĕнче метеорологи станцийĕ вырнаçтарнă. Шкул директорĕ – Чăваш АССР тава тивĕçлĕ учителĕ Павел Александрович мана шкул лесничестви çинчен аса илтерчĕ. Вĕренекенсем Вера Мироновна Малова ертсе пынипе çуллен Туканаша пырса кĕнĕ çĕрти çырма пуçĕнче, машинăпа трактор паркĕ тавра, çырма-çатра тăрăх йывăç нумай лартни çинчен каласа пачĕ. Шкул пахчипе паллашнă чухне йывăç лартакан ачасен ĕçне курса чунтан савăнтăм. Питĕ пĕрле пулас килет! Чăтаймарăм, пĕр ушкăнри ачасенчен тупмалли çинчен калама ыйтрăм: «Пĕр салтакăн çĕр алă, пĕр ура». Вĕсем пире пăхапăха пăшăл пăтти пĕçерчĕç те харăссăн кăшкăрса ячĕç: «Йывăç, йывăç!»

«Сăвăсем çырмастăн пулĕ те?» – тăрук кăсăкланчĕ Павел Александрович. Çавăнтах татăклă сăмах каласа хучĕ: «Куратăп, ачасене юрататăн эсĕ. Пире паянах чăваш чĕлхипе литература учителĕ кирлĕ. Çитес çул тата Вера Мироновна биолог тивĕçлĕ канăва тухасшăн. Сан валли яланлăхах ĕç вырăнĕ хатĕр пулать. Кил пирĕн шкула ĕçлеме!»

Çын кун-çулĕ йĕпĕр тытнă атăçă пек, ăçта чикет, çавăнта кĕртет. Çапла Зоя Витальевна чăваш чĕлхипе литература учителĕ пулса тăнă. Пулас биолога шкулти лесничествăна та шанса панă. 1977 çулта вĕренекенсем 4 гектар çине 29 пин тĕп йывăç лартса хăварнă. Пурте пĕр сиенленмесĕр хĕл каçнă. 1978 çулта 3 гектар çине 13 пин тĕп лартнă. Çапла вăй илсе ӳснĕ Зойка вăрманĕ.

Тепĕр çултан вăл пединститутра куçăн мар вĕренсе диплом илнĕ. Шкул – «иккĕмĕш кил» пулса тăрать. Пĕтĕм чун хавалĕпе ĕçлет Зоя Витальевна. Ниçта та курнăçланмасть. Пур ĕçре те хăйĕн сăпайлăхĕпе тата ĕçченлĕхĕпе палăрать. 1979-1983 çулсенче те вĕренекенсем çуллен вăтамран виçшер гектар çамрăк вăрман чĕртеççĕ.

### Пин-пин йывăç пуç таять

Телей – лаша мар, тӳрĕ çулпа илсе пымасть, тилхепене те пăхăнмасть теççĕ ваттисем. Зоя Витальевна тăван ялтах çемье телейĕ тупать, ятлă-сумлă тракториста Юрий Платонова качча тухать. Часах телейлĕ мăшăр тĕнче курма çула пуçтарăнать те Караганда хулине çитсе чарăнать. Юрий шахтăна ĕçе вырнаçать, мăшăрне ача садне чĕнсе илеççĕ. Чиперех майлашăнса каять пурнăç. Çĕнĕ хваттере пурăнма куçаççĕ. Çемьере ача хыççăн ача хушăнать. Ют çĕрте йытă та тунсăхлать. Тăван яла манмаççĕ вĕсем. Отпуск вăхăтĕнче Чăваш Ене васкаççĕ, тăванпĕтенпе курнăçаççĕ, Туканаш шкулĕнче пулаççĕ, вăрманта уçăлса çӳреççĕ. Ял хушшинче эпир те тĕл пулнăччĕ вĕсене. «Юра, сана шахтăра ытлăн кăларать теççĕ. Пĕрер муклашкине илсе килтĕн-и?» – тĕксе илнĕ ăна пĕри. Лешĕ нумай шухăшласа тăман çапла лаплаттарса хунă: «Сын сăмахĕ кăмрăк пек: пĕçертмест, анчах варалать. Элексĕсем ăмăрт кайăка та ула курак теççĕ».

1994 çулта таврăнчĕç Платоновсем тăван яла. Тăван ял ăшши – чĕре тулли ырри. Юрий Витальевич трактор çине ларать, Зоя Витальевна Туканаш шкулĕнче ĕçе кӳлĕнет. Çамрăк вăрманçăсемпе малтанлăха 1,5 гектар çинче 1200 йывăç лартаççĕ. 1995 çулта – 8495, 1996 – 12 пин, 1997 – 8400, 1998 – 17200.... Шкулти ĕçсем пур енĕпе те кал-кал пулса пыраççĕ. Вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕ Зоя Витальевнăна ырласа калаçаççĕ, тав тăваççĕ. Вĕренекенсем çулсерен йĕкел, палан, пилеш, шăлан, вĕрене вăрри, ытларах та ытларах пухаççĕ. Шăнкăрч вĕллисем тăваççĕ. Хĕл кунĕсенче вĕсен кайăксене апатлантарма шкул умне сырăшсем туса çакаççĕ. 2002 çулта шкул ачисем 6 гектар çине 4150 йывăç лартса хăвараççĕ, 29 килограмм хыр йĕкелĕ пухаççĕ, 360 килограмм палан татаççĕ.

Юрий Витальевич та районти трактористсен ăмăртăвĕнче малтисен ретĕнче пырать, ăна çуллен хаклă парне парса хавхалантараççĕ. 2004 çулта вăл пенсие тухать. Инкек вăрманта мар, çынсем тăрăх утать теççĕ-çке-ха. Сасартăк чирлет те вăхăтсăр çĕре кĕрет. Тивĕçлĕ канура пурăнакан Зоя Витальевна вара пилĕк ачапа хăраххăн тăрса юлать. Çапла вăл этем пурнăçĕ: пĕри уйрăлса каять, теприсем çухатаççĕ....

Кăçалхи ака уйăхĕн варринче Зоя Витальевнăран çыру илтĕм. Ăшă çыру. «Хăтатăхлачăсемпе туслă пурăнатăп. Ачасем, кинсем, кĕрӳсем пурте хисеплеççĕ, – çырать вăл. – Кĕçĕн хĕрĕм – Настя – Мускавра пичет университетĕнчен вĕренсе тухрĕ. Савнă каччипе пĕрлешрĕ. Халĕ ачапа ларать. Манпа пĕрле ялта пурăнакан кин те иртнĕ эрнере тепĕр хĕр çуратса пачĕ. Пĕтĕмпе сакăр мăнук!

Çанталăк ăшăтрĕ. Хĕвеллĕ кунсем тăраççĕ. Йывăçсем кăчкăпа витĕнчĕç...»

«Сана хисеплесе пурте пуç таяççĕ ĕнтĕ, – вĕçрĕ шухăш пуçра. – Пин-пин йывăç».

Пурнăçра пурте улшăнать, тĕрĕслĕх çеç юлать. Туканашри çеремлĕ урамсен икĕ енĕпе мĕскĕн пӳртсем тĕлĕреççĕ. Шкул алăкĕ çинче пысăк çăра çакăнса тăрать. Унта халĕ клуб теççĕ. Хирĕçри пысăк çуртра (хальчен унта клуб пулнă) – чиркӳ. Ял варринче кăкăр ачи касса кайса йĕрет. Унăн чуна çуракан ахрăмĕ Зойка вăрманĕсене çитиех саланать.

**Герман ЖЕЛТУХИН, Куславкка районĕ.**

# Çеçмер



Муркаш районĕнчи Çеçмер ялĕ Катькас ял тăрăхне кĕрет. Çак территорире "Моргаушская" чăх-чĕп фабрики вырнаçнă. Çеçмер ялĕ ĕлĕк Аслă Шеçмер (Большой Шесмер) е Шашкар ятлă пулнă. 19 ĕмĕрте Ахмане ят илнĕ. Кунти чăвашсем çĕр ĕçĕпе пурăннă, выльăх ĕрчетнĕ, çăнăх авăртнă, тимĕр шăратнă, йывăçпа ĕçленĕ, атă-пушмак çĕленĕ. 20 ĕмĕр пуçламăшĕнче шывпа ĕçлекен 3 çăнăх арманĕ пулнă. 1930 çулта "Идея" колхоз йĕркеленнĕ.

1920 çулччен ял – Козмодемьянск уесĕнчи Тутаркас вулăсне, 1920-27 çулсенче – Шупашкар уесне, 1927-39 çулсенче – Тутаркас районне, 1939-62 çулсенче – Сĕнтĕр районне, 1962-64 çулсенче Шупашкар районне кĕнĕ, 1964 çултанпа – Муркаш районĕнче.

1795 çулта (икĕ выççăлккăпа) ялта 82 кил шутланнă: 241 арçынпа 207 хĕрарăм. 1858 çулта 42 килте 120 арçынпа 127 хĕрарăм пурăннă,1897 çулта – 332 çын. 1926 çулта 77 кил хуçалăхĕ пулнă, 167 арçынпа 193 хĕрарăм, 1939 çулта – 141 арçынпа 191 хĕрарăм, 1979 çулта – 110 арçынпа 146 хĕрарăм пурăннă. 2002 çулта 90 килте 212 çын пулнă: 93 арçынпа 119 хĕрарăм.

**С. ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕсем.**



**Ираида Вячеславовна Потрясилова пенсионер**



**Владислав Потрясилов хирург хуларан амăшне пулăшма килнĕ**



**Культура çурчĕн ертӳçи Людмила Вишнева**



**Евдокия Козлова тивĕçлĕ канура пулсан та ĕççĕр лармасть**

ÇĔНĔ ЯЛ – ÇĔНĔ ШАЙ

# Чăннипех чĕртесшĕн

← 2-мĕш стр.

Тĕлĕнмелле çын вăл пирĕн. Эпĕ ун пеккине курман. Хăйĕн килĕнче темĕн те тунă, бассейн таранах пур. Тепри кун пек чухне ял çине алă кăна сулатчĕ пулĕ, ку апла мар. Ялшăн, унăн пуласлăхĕшĕн çунать: пуррине упрасшăн, çитменнине тăвасшăн.

**– Кунтах çуралса ӳснĕ-и? Вată е çамрăк?**

– Ку ялта çуралса ӳсменрен çапла "çунни" тĕлĕнтерет те. Çулĕпе те çамрăк темелле, тĕрĕсех калаймастăп та, анчах хĕрĕхе çитмен. Хулара хăйĕн строительство хуçалăхĕ те пур.

Яла килсен кашнинчех ырă тăвать. Нумаях пулмасть хамăр концерта ял халăхне йыхравланăччĕ, кӳршĕрен те пынă. Пыракансенчен кăштах укçа пуçтарас терĕмĕр. Сергей Лазаревич концерта килнисемшĕн хăй тӳлесе ячĕ. Çавнашкал вăл пирĕн.

**– Яла чĕрĕлĕх кĕртекен апла. Ăна кура ыттисен шухăшлавĕ улшăнать пек-и?**

– Итлеççĕ пулсан ыррине шанмалла. Вăхăт кăтартĕ. Хальлĕхе ялта хăшне-пĕрне эрех-сăра (уйрăмах – "фанфурик") пĕтерет. Ав ĕне майракине кастарма ĕнер аран ялта арçын тупрăм. Ĕçке пула пурнăçран уйрăлаççĕ. Ĕçченсем те пур. Владимир Андреевăн çемйи çĕр ĕçне те ĕлкĕрет, выльăхне те нумай усрать. Техникăпа ачисем ял çыннисене те пулăшаççĕ. Çав тери маттур.

**– Хăвăр та аптăрамастăр-ха. Пĕччен пулсан та картиш тулли выльăх усратăр. Нумай çул хулара пурăннăскерĕн ялтан чăнахах ниçта та каяс килмест-и? Хули çывăх пулсан та ялăрта клубсăр пуçне лавкка та, фельдшер пункчĕ те çук.**

– Лавккана юнашар Шомик ялне те кайма пулать. Хальлĕхе кăна çук. Сергей Лазаревич "тăватпăр" терĕ. Вырăнĕ мĕнле илемлĕ кунта. Çурт чӳречинчен Атăл курăнать. Вăрман та юнашарах. Çут çанталăк газĕ пур, шыва нумайăшĕ киле кĕртнĕ. Çамрăксем çĕнĕ çуртсем лартма тăрăшаççĕ. Пушă лараканни сахал, кунта çуралса ӳснисем хуларан тăван тăрăха таврăнасшăн. Çĕнĕ шухăшлавпа, тăрăшулăхпа ял вăранать, чĕрĕлет. Капла калама, тен, иртерех те, анчах "çапла пултăр" тесе ĕçлĕпĕр те савăнăпăр.

**Ирина НИКИТИНА.**

# Кун-çул ахаль иртмен

Светлана Рыкова Тури Шĕмшешри В.Чапаев ячĕллĕ хуçалăхăн ĕне ферминче 38 çул ĕçленĕ. Вăл шутра вунă çулне – ферма заведующийĕнче.

Светланăн ачалăхĕпе çамрăклăхĕ Етĕрне районĕнчи Исментер ялĕнче иртнĕ. Амăшĕ виçĕ ачине пĕчченех çитĕнтернĕ. Шкул пĕтерсен Светлана колхозра ĕçлеме тытăннă. Каярахпа вара Украинăра пурăнакан пиччĕшĕ патне çул тытнă. Каярахпа тăван тăрăхах таврăннă. Пĕр вăхăт ял хуçалăхĕнче, Шупашкарти электроаппаратура заводĕнче ĕçленĕ. Хитре те маттур хĕре Элĕк районĕнчи Шĕмшеш каччи Леонид Рыков куç хывнă. Туслăх ерипен юратăва куçнă. 1970 çулта çамрăксем туй кĕрлеттернĕ. Светлана кун-çулне фермăра ĕçлесе ирттернĕ пулсан, мăшăрĕ – трактористра. Вăл «Шумшевашский» совхозра 36 çул вăй хунă.

Туслă çемьере тăвата ывăлпа пĕр хĕр çитĕннĕ. Ашшĕ-амăшĕ вĕсене пурне те тивĕçлĕ пĕлӳ илме пулăшнă.

2008 çултанпа Леонидпа Светлана Рыковсем – тивĕçлĕ канура. 8 гектар пай çĕрĕ çинче пахча çимĕç, нумай çул ӳсекен курăк çитĕнтереççĕ. Ватлăха пăхмасăрах ĕне, сурăх, хур-кăвакал усраççĕ. Ачисем те пулăшаççĕ вĕсене. Пысăк ĕççене яланах пĕрле пурнăçлаççĕ.

**Владимир ЕГОРОВ.**
**Элĕк районĕ.**

# Алăра – сенĕкпе кĕреçе



**Хире тухакан техникăн ытларах пайĕ – ют çĕр-шывра кăларни. Хамăрăн тракторсемпе комбайнсем ĕмĕтре çеç.**

Çак статьяра илсе кăтартакан цифрăсем чылайăшне тĕлĕнтерессе туятăп, ял хуçалăхĕнчи лару-тăру çавнашкалах япăхланнă-ши тейĕç. Чаплах мар çав. 1990 çултанпа Раççейре Агропрома пулăшма уйăрнă укçа виçи 19 процентран 1,2 процента çити анса ларнă. Асăннă кантур ертÿçисем кун çинчен халăха пĕлтерме шикленеççĕ, мĕншĕн тесен апат-çимĕçĕн çуррине чикĕ леш енчен турттарни ĕмĕрне те пулман. Мана ĕненместĕр пулсан статистикăна тишкерĕр. Патшалăх ял хуçалăхĕ валли 168 млрд тенкĕ парать, çав вăхăтрах Анăçран 1,3 трлн тенкĕлĕх импорт килет! Акă мĕн патне çитсе тухрăмăр.

Пирĕн пулăшу 1,2 процент терĕмĕр. Танлаштарма ытти патшалăхсене илсе пăхар. Казахстанра вăл – 19, Белоруссире – 20, Азербайджанра 25 процент. Европăри çĕр-шывсем вăтамран 33 процент уйăраççĕ, США хыснан 24 процентне шеллемест. Куратăр-и епле пысăк уйрăмлăх.

Каçарăр та, паянхи ял сăн-сăпачĕ хире кунтăкпа тырă акма тухнă, çине çĕтĕк-çатăк уртса янă хресчене аса илтерчĕ. Аталану шайĕпе вун тăххăрмĕш ĕмĕрте эпир. Алăра – сенĕкпе кĕреçе. Раççейри çĕр улмин – 83,3 процентне, пахча-çимĕçĕн – 71,9, майракаллă шултра выльăхăн 46,1 процентне килти хушма хуçалăхра туса илеççĕ. Лавккари сĕтĕн çур пайĕ – килте суни. Кашни иккĕмĕш такапа сурăх ял кĕтĕвĕнче çÿрет. Пахчари тата витери ĕçсене эпир ансат хатĕрсемпе пурнăçлатпăр. Çавăнпа тыр-пул ÿстерекен умĕнче пуç таймалла пирĕн.

Раççей инкекĕ вăл – пĕр вĕçĕм реформа ирттерсе ял хуçалăхне сăтăр кÿни. Юлашки 20 çулта 29 пин колхозсовхоза (аграри тытăмĕн иккĕвиççĕмĕш тÿпи) аркатрĕç. Раççей карттинчен 30 пин ял çухалчĕ, 22 пин ача садне, 14 пин шкула, 16 пин клуба тата 4 пин библиотекăна хупнă. Ял халăхĕн 44 процентĕ чухăн, 20 процентĕ пурăнмалли чи пĕчĕк виçе чухлĕ те ĕçлесе илеймест. Саманана кура тĕлли-паллисĕр çапкаланса çÿрес, ĕçкĕпе иртĕхес турткăмсем вăйланчĕç, вилекен шучĕ пысăк.

Кĕреçепе чăнкă тăвайккине тикĕслесе хума хатĕр çынна техника мĕн тума кирлĕ. Патшалăх пуçĕнче ларакансем çапла шухăшланă пулас, паян та кивĕ меслетсенчен хăтăлаймастпăр. Шутлăр-ха, импорт пулăшмасан тракторсен 80 процентĕ, комбайнсен 50 процентĕ уя тухаймĕ. Ял хуçалăхне техникăпа тивĕçтерекен отрасле çав териех юхăнтарса янăшăн кам та пулин явап тытрĕ-и?

Лаши майăн пушши теççĕ. Килте пĕр йăран чавса курманни хресчене суха пуç тытма вĕрентет, ĕне суса курманни кĕтÿ пахалăхне ÿстермелли майсем çинчен сÿпĕлтетет – çавăнпа ĕç-пуç ăнмасть пирĕн. Патша саманине хурлас йăла пĕтмен-ха, халь тĕрĕс çулпа пыратпăр-и? Выльăх шучĕ 1916 çултинчен 1,6 хут сахалрах-мĕн! Ял чечекленет тесе çăвар уçма епле хăятăр?

Лавкка сентрисем ют апатпа тулса тăкăнчĕç те тинех "коммунизма" ура ярса пусрăмăр пулать. Çак асамлăха курсан куç-пуç алчăраса каять, анчах мĕн пуррине туянма халăхăн укçи çукçке. Сентре çумĕпе чĕлхе çулласа иртекен ытла та мĕскĕнле туять хăйне, тепри супермаркет йышшине кĕме те вăтанать. Статистика улталамастех ĕнтĕ: пирĕн çĕр-шывра выçă пурăнакансен хисепĕ 10 процент ытла, 20 процентĕ куллен кирлине те туянаймасть. Тавар туянаслăх икĕ хут чакни çинчен сире пĕр тÿре те каламĕ, мĕншĕн тесен çÿлтисенчен хăраççĕ.

Патшалăх политикине хамăр ăнкарсах çитейменнипе-ши, хăш-пĕр утăмсене хак памасăр чун чăтмасть, тупата. Çÿлтисем хресчен нушине çывăха илменнине кура Патшалăх Думин те шыв сыпнăн ларас марччĕ. Пуçласа суйлансанах парламентра аграрисен хутне кĕрекен чылайччĕ, кайран влаç партийĕпе çывăхланса кайрĕç те сасси çĕтрĕ. Тÿррипе каласан, "халăх тарçисем" хушшинче пĕр тракторист е дояркăна кураймăр. Вĕсем яланхилле сухара е кĕтÿре, пылак сăмахпа перкелешме ерçÿ çук...

**Александр МИХАЙЛОВ.**



Зинаида Серебрякова. Вырма. 1915 ç.

# Çĕр-аннемĕр куççулĕ



Çĕпĕрти тата Инçет Хĕвел тухăçĕнчи пин-пин гектара Китайран килсе тулнисем акса туни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Ÿркенмен халăх, яра кун пĕçĕ тăратса выртмаççĕ.

Çĕр-аннемĕр пулнă, пулать те. Ютран килнисем ăна эшелонпа тиесе каяс хăрушлăх çук. Пире çуратнă çĕр çинче хамăрăн ытларах вăй хумалла пек, анчах пурăнан пурнăçра йăлт кутăнла пулса пырать. Акă пай çĕрĕ валеçсенех ĕçе пуçăнма хистерĕç. Мĕнпе сухаласа акмалла? Кайран, тыррине пуçтарса кĕртсен, кама сутмалла?

Сапаланчăк колхозсен ванса ĕлкĕреймен тракторĕ-прицепĕ кантура çывăх çынсен аллине лекрĕ, эпир нимсĕр тăрса юлтăмăр. "Кахалланатăр, ĕçлеме пĕлместĕр" тесе пай çĕрне те туртса илме хатĕр.

Пĕр машина минерал удобренийĕ кÿрсе килмеллеччĕ ман. Йĕрке тăрăх ун валли ятарлă лицензи илмелле иккен, химикатсене хума та ятарлă вырăн тутармалла малтан. Удобрение сирпĕнме пултаракан япаласен шутне кĕртнĕмĕн. Халь тин пĕлтĕм, тавах уншăн. Тата мĕнле чару шухăшласа кăлараççĕши?

Электроэнерги пирки пĕр-икĕ сăмах. Пĕчĕк фермăри (60 пуç ĕне) ĕçе тĕрĕс йĕркелесе сĕт сăвăмне ÿстермелли майсем пур. Манран киловатшăн 5 тенкĕ те 80 пус шăйăраççĕ, пурте пĕлекен Дерипаска хуçалăхĕ вара 1 тенкĕ те 26 пус кăна тÿлет-мĕн. Ăçта тĕрĕслĕх? Е вăл урăх йышши предприниматель пулнине тĕпе хунă-и?

Кредит, субсиди панă чухне те йĕркесĕрлĕх. Калăпăр, 600 пуç усрамалли комплекс хăпартаççĕ тейĕпĕр. Патшалăх тăкаксен 50-70 процентне саплаштарать. Çутă, газ тата шыв кĕртессине хысна хăй çине илет, çул туса параççĕ. Питĕ аван. Тепĕртакран çаврăнса пăхатăн та, шаннă кайăк йăвара çук: комплекс дотацисемпе субсидисемсĕр ĕçлесе пыраймасть иккен. Мĕн тума кирлĕ унашкал холдинг?

Комплекс хута яма тăккаланă 300 млн тенке çемье фермисем уçма усă курнă пулсан пурлăха çилпе вĕçтерместтĕмĕр. Хысна укçишĕн вырăнти пуçлăхсенчен çирĕпрех ыйтсан çеç йĕрке пулĕ.

**Василий МЕЛЬНИЧЕНКО,**
**Уралти фермерсен канашĕн ертÿçи.**

# Мăян акмасăрах ÿсет

Дмитрий Медведев премьер пĕр тĕл пулура хамăр çитĕнтернĕ апатçимĕçе туянма чĕнсе калани асра. Пĕлместĕп, Кремльте пирĕн çăкăра çиеççĕ-ши, çапах тăван çĕр çинче ÿстернине мĕн çиттĕр.

Хуларан яла пурăнма куçсан эпĕ чăнласах фермер ĕçне кÿлĕнме шухăшларăм. Ара, çын алли перĕнмен лаптăк мĕн чухлĕ пирĕн! Ав, ялпа юнашарах кивĕ сад юлташлăхĕ пур. Çынсем нимĕн те лартса туман çĕре мăян пусни чуна ыраттарчĕ. Вунă гектар ытла уссăр выртать-çке. Пирĕн тăрăхри пек пулăхлă çĕр ниçта та çук.

Хĕпĕртенипе çÿл тÿпере вĕçменни кăна. Улма-çырла, пахча-çимĕç туса илме ĕмĕтленнĕскер пирвайхи утăмсенчех такăнтăм. Малтан ман çав лаптăксен хуçисене шыраса тупмалла, туяннине хут çырса çирĕплетмелле, кадастр шутне тăратмалла – эй, пурне те асăнса тухмăп, пуç çаврăнса кайрĕ. Лаптăксене тахçанах пăрахнă пулин те хăшĕ-пĕри суда парса тинкене кăларасса систерчĕç. Кашни вактĕвекшĕн укçа сăптăраççĕ, вăхăта нумай çухатăн терĕç те ман кăмăл хуçăлчĕ.

Тепĕр тесен, кама кирлĕ – туянччăр, йывăç-тĕмрен тасатчăр. Капла питĕ хакла ларнине пĕрисем тÿрех тавçăрнă пулас, çавăнпа килĕшекен тупăнман. Бюрократи чăрмавĕсене сирсе хресченсене çул уçса парас вырăнне кантуртисем шалу уçăхан ÿсĕ-ши тесе лараççĕ. Ăнлантăм. Мăян пирĕн уйсенче акмасăрах чашкăрать, тÿресен ĕç укçи те тĕш тырă мĕн чухлĕ туса илнипе пачах çыхăнман-çке.

Тепĕр самант пирки каласшăн. Ял хуçалăх министерстви уссăр выртакан çĕре шута илес ĕçе спутник хатĕрĕсене те явăçтарасшăн-мĕн. Çÿлтен пăхсан пирĕн хуçасăрлăх аванрах курăнать пулĕ.

**Евгений ВАСИЛЕНКО,**
**Краснодар крайĕнчи фермер.**

Кăларăма Вячеслав ГРИГОРЬЕВ хатĕрленĕ.

Пурнăç пăрăç

# Сывă пул, Мускав

## Çынна тирпейлесе пытарассипе çыхăннă тăкаксем 250-300 пине кайса лараççĕ


Мускав

**...Япăх тĕлĕк курнипе Катюша çур çĕр иртсен вăранса кайрĕ. Чим-ха, кĕсье телефонĕпе шăнкăравлаççĕ. Диван çине хунăскер пĕрре çуталса, тепре сӳнсе сас парать. Çĕр варринче кама мĕн кирлĕ-ши тата? Ырра мар ку, туршăн та.**

Мускавран пиччĕшĕн мăшăрĕ Полина шăнкăравлать-мĕн:

– Катя, илтетни эс мана?! Эля вилсе кайрĕ вĕт. Эля... – хăй йĕрет, сасси чĕтревлĕ.

Мĕнле-ха капла? Аслă хĕрĕ Эля вăтăра та çитмен. Мĕн амакĕ сиксе тухнă-ши? Эй, тĕнче... Çын паян пур та ыран çук. Йывăр хуйхăра ашшĕ-амăшне пулăшмаллах. Инçе çула пуçтарăнмалла пуль. Владик пиччĕшĕн йăмăкĕсем тăваттăн: Клара, Зоя, Наташа, тата Людмила. Тĕрлĕ хулара пурăнаççĕ, çемьеллĕ. Вĕсене пĕлтерес.

Чăваша качча тухса Куславккарах юлни Катюша çеç. Пиччĕшĕ ялтан тухса кайса Мускавра тĕпленни çур ĕмĕре яхăн. Ӳсерехпе унăн икĕ хĕр пĕрчи – Эльăпа Роза яла хутран-ситрен килкеленĕ. Ытарайми чăваш пикисем, пĕри тепринчен капăртарах тумланнă. Чун тĕпренчĕкĕсене чипер çӳретессишĕн укçа хĕрхенместчĕç çав, мĕн ыйтнă – çавна туянса панă. Тепĕр чухне иртĕхтернĕ те. Çын хушшинче хăйсене вĕçкĕнрех тытасси çавăнтан пуçланмарĕ-ши. Яла тухсан чăвашла пуплесшĕнех марччĕ: "Мы не понимаем, говорите по-русски", – тесе тутине тăсатчĕç.

Ак халь Эля çут тĕнчепе сыв пуллашрĕ. Ашшĕ ăна çăмăл машина туянса панине илтнĕччĕ-ха, çавăнпа аварие лекнĕ-ши? Çак ыйту автобусра çул тăршшĕпех канăç памарĕ Катьăна. Килти выльăх-чĕрлĕх пирки кулянмалли çук – пуçтарнă, мĕн-мĕн тумаллине ачасене каласа хăварнă. Мускавĕ чуна сехĕрлентерет.

Полинăсен хваттерĕнче шăп. Владик пуçне пĕксе ларать. Алăка мăшăрĕ уçрĕ. Ункун пăхкаларĕ Катя – тупăк курăнмасть.

– Вилене киле илсе килмеççĕ пирĕн, – ун çумне пырса ларчĕ Полина.– Моргра сыв пуллашмалла. Эльăна машина çумĕнче тупнă...

Владик, тăванĕсем килнипе кăштах йăл илнĕскер, хăрушă ĕç-пуç çинчен каласа пачĕ. Хĕрĕ аварие лекмен-мĕн, такамсем хытă хĕненипе чунĕ тухнă.

– Тĕрлĕ ăçти çукпа ан çыхлан тесе миçе каларăм пуль, яхăнне те ямарĕ, – тет Владик. – Çав наркăмăша – наркотика пула тĕп турĕç, тупата. Хĕрĕме чĕн пиçиххипе вĕтелеме патнех çитнĕччĕ, алă çĕкленмерĕ. Амăшĕ пĕрмай ун хутне кĕрет, иномарка илсе парар, пирĕн кӳршĕсенчен чаплăраххине пăхса хутăм тет.

– Çамрăклах иртĕхтеретпĕр çав.

– Ара, хамăр нушапа ӳснĕ те ачасене лайăхрах тăвас килет-çке. Сире пĕлтерменччĕ: Эльăна темшĕн айăпласа следстви изоляторĕнче çур çул тытрĕç вĕт! Тамăка лекнипе черчен чунĕ тӳсеймен курăнать. Героин сутса услам тăвакансен ячĕсене, адресĕсене каланă-ши? Тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлместĕп. Полици шарламасть. Наркотик патшисем хăйсен хӳрешкисене тĕллеттерсе янă – çавсемех пуçне çирĕç, турă йăлтах курать.

– Эля упăшки ăçта тата?

– Кам пĕлет. Çулталăкранах уйрăлчĕç вĕсем. Йĕкĕтне килĕштернĕччĕ эпĕ. Туртмастчĕ, ĕçместчĕ. Пĕр сăмахпа, тӳрĕ çын. Çемье салансан Эля пурнăçĕ айăн-çийĕн çаврăнса кайрĕ. Ашшĕ-амăшĕ сăмахне хăлхана чикмен. Кам килсе тухатрĕ-ши? Эпир ку яхăнта никама та япăх туман.


Масар умĕ

Полина каланă тăрăх – виле тирпейлесе пытарма сахалран та 250-300 пин тенкĕ кирлĕ. Ку сăмахсене илтсен ял çынни хăй тупăка кĕрсе выртĕ ахăртнех. Халь "Хонда" машинине сутма тивет-тĕр. Паллах, тăванĕсем пухса пачĕç. Вăт самана... Чиркӳре асăнтармалла, моргра справка çырса панăшăн та укçа сăптăраççĕ мур илесшĕсем. Юлашки çула ăсатассипе çыхăннă ытти пулăшу ĕçĕсене асăнмăпăр та. Хуйха ӳкнĕ тăванĕсен çири кĕпине хывса илме хатĕр ритуал службин çыннисем. Тепĕр япала тĕлĕнтерчĕ: Эльăпа инкек сиксе тухни çинчен полицирен тин кăна шăнкăравланă – ритуал сотрудникĕ персе те çитнĕ. Ăçтан, мĕнле майпа пĕлсе тăраççĕ вĕсем – калама хĕн.

Мускав хакĕсем ураран ӳкереççĕ. Урăх тĕнчене лекнĕн туятăн хăвна. Кулленхи хутшăнура ытларах долларпа перкелешеççĕ. Пирĕн пек айвансене çаратмалла ĕнтĕ. Юриех Интернета кĕрсе пăхрăм. Тĕп хулара пурĕ 133 масар, пытарма иккĕшĕ уçă-мĕн. Паллă çынсене хăш-хăш çăва çинче пытарнине пĕлетпĕр-ха, ахаль çынсене облаçа леçеççĕ. Çуллен мегаполисра 120 пин виле. Çĕнĕ Шупашкар пысăкăш "хула" вĕт ку! Çуррине крематорире çунтараççĕ. Пытарассипе çыхăннă патшалăх прейскуранчĕсене çирĕплетнĕ, анчах вĕсене никам та пăхăнмасть. Сăмахран, чиркӳре кĕлĕ вуланăшăн 7,5 пин тӳлемелле пек, çĕр лаптăкне тӳлевсĕр уйăрмалла. Ритуал агентствинче чи йӳнĕ тупăк 7200 тенкĕ тесе палăртнă, санăн 20 пин тыттармалла. Хут татки çырса панăшăн 9 пин ыйтаççĕ-çке.

Ăçта çитсе тухрăмăр капла?

Эльăпа сыв пуллашнă самантра темиçе çул каялла Мускавра пулса иртнĕ тĕслĕх аса килчĕ. Монолит çинче ĕçленĕ пĕр чăваш строителĕ тимĕр-бетон плита айне пулса вилчĕ. Чунĕ самантрах тухнă çирĕмри ачан. Стройка хуçине "сухарь" тесе ытахальтен каламан-тăр, вилене киле ăсатма пĕр пус та памарĕ. Аптранă енне пĕр "Газель" водителĕпе хамăр каласса пăхрăмăр.

– Шупашкара миçе çухрăм терĕр? Аха, 700. Яла çитме çул пур-и? Апла бензин мĕн чухлĕ кирлĕ? Ман такса – 100 пин.

– Юрĕ, 70 пинпе килĕшетĕн-и? Тăванĕсен 50 пин пур, ыттине хамăр пухрăмăр. Этем пул ĕнтĕ.

Явăш çăви çине илсе килсе пытарчĕç. Хуйхă çапса хуçсан хаклашса тăмăн. Пытару хакĕсем пĕчĕкрех пирĕн. Тепĕр тесен, пур япалана Мускаври пек укçапа виçер мар, чăваш тăван çĕрте канлĕх тупни пахарах...

**Григорий СЛАВИН.**

### КУЛĂШ, ПУЛĂШ!




ÇЫРĂНТАРУ – 2014

# Электрон çырăнтару çинчен – тĕплĕн

"Хыпара" тата "Çамрăксен хаçатне" электрон майпа çырăнсан хут çине пичетленĕ хаçатсем вырăнне сирĕн патăра вĕсен электрон версийĕ пырса тăрĕ. Кĕскен – пичет кăларăмĕ тухнă кун хăвăрăн электрон почтăра кăларăмăн виртуаллă версине PDF форматра уçса вулаятăр. Сирĕн компьютерăн, ноутбукăн, нетбукăн, планшетăн е тата смартфонăн экранĕнче хут çинче пичетленнĕ хаçатах курăнĕ. Вăл текст тĕлĕшĕнчен те, калăплав енĕпе те почтальон валеçекеннинчен уйрăлса тăмасть.

***"Хыпарпа" "Çамрăксен хаçатне" электрон майпа çырăнмашкăн хăвăршăн меллĕ меслете суйлăр:***

1. Пирĕн сайтра - hypar.ru - "çырăнтару" пайра заявка хăварма пултаратăр. Пирĕн ĕçченсем сирĕнпе çыхăнĕç. Укçа тӳлемелли счета факспа е электрон почтăпа ярса парĕç. Ăна кирек мĕнле банкра та тӳлеме пулать, квитанци копине редакцие 28-83-70 факспа е hypar@mail.ru электрон почтăпа ярса пама çеç ан манăр.

2. Редакцие килсе çырăнма май пур. Адресĕ: Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм.

3. Хаçатăн электрон версине банк урлă çырăнса редакцие квитанци копине ярса пама пулать. Банк реквизичĕсем: АУ "Издательский дом "Хыпар" Мининформполитики Чувашии, р/с 40603810200000013969 в АКБ "Чувашкредитпромбанк" ОАО г. Чебоксары, БИК 049706725, к/с 30101810200000000725, ИНН 2130075064, КПП 213001001.

4. Яндекс-укçа (Яндекс-деньги) тӳлев тытăмĕ урлă. Электрон енчĕк номерĕ: 410012154010810.

***Ан манăр: хаçатăн электрон версине сирĕн патăра ярса памашкăн хăвăрăн электрон почта адресне палăртăр!***

**Электрон çырăнтару мĕншĕн меллĕрех?**

• **Укçăра перекетлетĕр.** Электрон çырăнтару хакĕ почта урлă илсе тăнинчен 8 хут йӳнĕрех. **"Хыпар" хаçата 2014 çулăн II çуррине** почтальонран илсе тăрас тесен 744 тенкĕ те 12 пус кăларса хума тивет. Электрон версине çур çуллăха çырăнма – 90 тенкĕ кăна. 654 тенкĕ перекетлесе эсир Чăваш радиовне итлеме приемник туянма пултаратăр. **"Çамрăксен хаçатне"** почта урлă илсе тăма 375 тенкĕ кирлĕ. Электрон версине эрне кунсерен çур çул вулама – 50 тенкĕ. Перекет – 325 тенкĕ! Ку укçапа кил хуçи – кĕпе, мăшăрĕ çӳç типĕтмелли фен туянма пултарать. Ачана парне тăвас тесен те нумай шухăшламалла мар – чаплă энциклопеди илеетĕр.

• **Почтальона кĕтсе хăшкăлмăр.** Мĕн пытармалли: чылай тăрăхра хаçата е каçхине, е тепĕр кунхине çеç пырса параççĕ. Электрон верси вара хаçат тухнă кун ир-ирех сирĕн электрон почтăра пулĕ.

• **Хаçата электрон майпа тĕнчен кирек хăш кĕтесĕнче те илсе тăма пулать.** Халĕ çĕнĕ номер аякри йăхташăмăрсем патне пĕр эрнерен кăна çитет. Электрон верси вара – çав кунах.

• Эсир тинĕс хĕрринче хĕвелпе пиçĕхетĕр-и, командировкăна каятăр-и, çул çӳреве тухатăр-и?.. **Хаçатăн электрон версине кирек ăçта та вулама пулать.**

• **Килĕшнĕ статьясене** хут çинчен вулас тесен ăна принтерпа хăвăра кирлĕ чухлĕ пичетлеме пултаратăр.

• **Хаçат номерĕсем нихăçан та çухалмĕç** – хăвăра килĕшнĕ интервью-очерка темĕн чухлĕ вăхăт иртсен те электрон почтăна уçса тупса вулама меллĕ.

**Электрон çырăнтарăвăн çитменлĕхĕ пур-и?**

Вăл – пĕртен пĕрре: хаçат хутне чăштăртаттарма май çук.

**"Хыпарпа" "Çамрăксен хаçатне" электрон майпа çырăнас тетĕр-и? Эппин, виртуаллă тĕнчере сире хапăл туса кĕтетпĕр!**

ÇЫРĂНТАРУ – 2014

Капкăн

ТĂВАН АТĂЛ

«Тăван Атăл», «Капкăн» çырăнсан тунсăхламăн, тусăм, нихăçан!

| Индекс | Кăларăмсем | Çырăнтару хакĕ |
| --- | --- | --- |
| 11529 | Тăван Атăл | 319-08 |
| 24608 | Капкăн | 185-04 |

Тантăш

Самант

Тетте игрушка

Ача-пăчана хаçат-журналсăр хăварар мар – «Тантăш», «Самант», «Тетте» çырăнса парар!

| Индекс | Кăларăмсем | Çырăнтару хакĕ |
| --- | --- | --- |
| 54802 | Тантăш | 280-44 |
| 73208 | Самант | 181-02 |
| 73771 | Тетте | 143-52 |

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Ака, 30 – юн кун | Çу, 1 – кĕçнерни кун | Çу, 2 – эрне кун | Çу, 3 – шăмат кун | Çу, 4 – вырсарни кун | Çу, 5 – тунти кун | Çу, 6 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 5.09 | 5.07 | 5.05 | 5.03 | 5.00 | 4.58 | 4.56 |
| | анать | 20.28 | 20.30 | 20.32 | 20.34 | 20.36 | 20.38 | 20.40 |
| Кун тăршшĕ | | 15.18 | 15.23 | 15.27 | 15.31 | 15.36 | 15.40 | 15.44 |
| УЙĂХ | тăхри | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 2-мĕш кун | 3-мĕш кун | 4-мĕш кун | 5-мĕш кун | 6-мĕш кун | 7-мĕш кун | 8-мĕш кун |
| | | Вăкăр паллинче | Йĕкĕреш паллинче | Йĕкĕреш паллинче | Рак паллинче | Рак паллинче | Рак паллинче | Арăслан паллинче |

### «КАПКĂН» КĔТЕСĔ

# «Хамăр яла» ан варала,

## е Эрех кĕленчисене илемлетме кирлех-ши?

Пасар ĕмĕрĕ пурнăçа пысăк улшăнусем кĕртет. Тавар туса кăларакансене те, хатĕр тавара сутакансене те ăнланма пулать: сутăнман япалапа никамăн та аппаланас килмест. Çавăнпа та пуçаруллă предпринимательсем тавара мухтамалли, çиелтен те пулин хитрелетмелли майсем шыраççĕ.

Тĕслĕх шыраса инçе кайма кирлĕ мар – эрех-сăра кĕленчисем тÿрех куç умне тухаççĕ. Мĕнле кăна илемлетмеççĕ вĕсене, этем ăс-тăнне арпаштаракан шĕвек тултаракансерсене?

Эрех лавккинчи сентре çинче шăкăриех лараççĕ илĕртÿллĕскерсем: "Çул курки", "Золотое кольцо", "Мягков", "Акатуй"...

Каç пулттипе лавкка çумĕнче çакнашкал ÿкерчĕк курăнчĕ. Виçĕ арçын пĕр шухăшлă пулнă та кĕленчене тĕппипех пушатнă. Ÿсĕрскерсем аран-аран пускалаççĕ, тăватă уран упаленменни кăна. Çавăнтах пушă кĕленчи те. "Хамăр ял" тесе илемлетнĕскер. Хамăр яла вараласçĕ-иç кусем.

Лавккана кирлĕ ĕçпе пынă чух курава лекнĕн туйăннăччĕ, тухса килелле кайнă чухне килпетсĕр çак ÿкерчĕк шухăша ячĕ. Пирĕн общество чăннипех те ĕçке хирĕç кĕрешесшĕн пулсан рекламăна та хăш-пĕр улшăнусем кĕртмелле мар-ши? Хаяр эрех-сăрана ачаш, пылак, чаплă ятсем париччен ăна чăн тивĕçлĕ ятпах – йÿçек тутăллă пулнине палăртсах – кăларни халăхшăн усăллăрах пулĕччĕ. Сывă пурнăçшăн кĕрешекенсен пĕрлешсе пĕр шухăш тытма вăхăт: сывлăхшăн сиенлĕ таварăн çынна илĕртмелле мар, хăйĕнчен тĕртсе ямалла.

А. Плеханов ÿкерчĕкĕ




**Н. СУЙМАНОВ.**

# Пукане çĕклесе çÿресен





Ирăпа Шурик ман куç умĕнче ÿссе çитĕнчĕç. Амăшĕсем район больницинче пĕр каçра çăмăлланнă вĕсен. Пĕри ывăл çуратнă, тепри – хĕр. Çуралнăранпах пĕрле ачисем. Ара, кÿршĕсем-çке. Ĕçе кайнă чухне ирсерен тĕл пулаттăм шĕвĕрккесене. Вĕсем те "ĕçе" васкатчĕç. Ача садне. Апăран çавăтса, çитĕннĕ çынсем пек калаça-калаça утатчĕç. Уйрăмах çакă асра юлнă: Шурик Иринăн пуканине çĕклесе пыратчĕ. Шкула çÿреме пуçласан та уйрăлмарĕç кÿршĕсем. Халĕ Шурик хĕр пĕрчин пуканине мар, сумкине йăтса çÿреме тытăнчĕ. Кайнă чухне те, таврăннă чухне те. Сумки вара çулсерен йывăрлансах пычĕ. Шкул хыççăн вĕренме иккĕшĕ те хулана кайрĕç. Кайнă-килнĕ хушăра Шурик çаплах кÿршĕ хĕрĕн сумки-кутамккине йăтрĕ те йăтрĕ.

– Шурик, эсĕ Иринăн носильщикĕ пулмах çуралнă курăнать, çаплах ун сумки-хутаçне сĕтĕрсе мекĕрленен, – шÿтлĕн асăрхатаранçи пултăм ăна пĕррехинче. – Хăçанччен тăсăлать ку?

– Туйччен, – йăл кулчĕ каччă.

Çакăн хыççăн нумай та вăхăт иртмерĕ – Шуриксен пÿрчĕ умне тĕрлĕ тĕслĕ хăмпăпа илемлетнĕ машинăсем пĕрин хыççăн тепри пыра-пыра чарăнчĕç. Малти машинăн пĕр алăкĕнчен – Шурик, тепринчен шап-шурă тумлă Ирина тухрĕç. Каччă çавăнтах хĕре икĕ аллипе хăй умне меллĕн çĕклесе илчĕ те уçă хапхаран йăтсах кĕрсе кайрĕ. "Паян хĕрĕн япалисене мар, хăйне çĕклесе илчĕ, – çиççе иртрĕ шухăш пуçра. – Çак куна кĕтсе илме хатĕрленнĕ иккен ман кÿршĕ".

Хулара пурăнакан çамрăк мăшăра чылайранпа курманччĕ. Ĕнер урамра тĕл пулсан тĕлĕнсех кайрăм: Шурик каллех "пукане" çĕкленĕ. Чăтса тăраймарăм сăмах хушмасăр:

– Александр, çаплах Иринăн пуканине йăтса çÿретĕн иккен-ха.

– Çу-ук, ку пукане Ирăн çеç мар. Ăна иксĕмсĕр ăсталанă, – кăмăллă кулăпа çиççе хуравларĕ телейлĕ ашшĕ.

**А.САВЕЛЬЕВ-САС.**

## Çылăх каçарттарни

Пĕр хĕрарăм чиркĕве кĕрет те пуп патне пырса тархаслать:

– Ах, Ваççили атте, пулăш мана упăшкаран уйрăлма.

– Мĕн сиксе тухрĕ, хĕрĕм?

– Упăшка кашни кун ÿсĕр çÿрет, ĕçлемест. Ман çине алă çĕклеме те именмест...

– Кунашкал арçынна мĕншĕн качча тухрăн вара? – ыйтать пуп.

– Ухмах пулнă.

– Апла иккен. Санăн уйрăлас пирки çăвар та уçмалла мар, тав тумалла ăна. Арçынну сана, ухмаха, качча илнĕ. Савăнмалла çакăншăн.

## Патак тытни çителĕклĕ

Урам тăваткалĕнче тăракан полицейски патне арçын ача йĕре-йĕре пырать.

– Кам кÿрентерчĕ сана? – ыйтать полицейски.

– Анне... шăккăлат туянса памарĕ.

– Мĕншĕн?

– Шкулта «патак» хыççăн «патак» илнĕшĕн.

– Мĕнле-епле патак? – тĕпчет полицейски.

– Ну, япăх паллă эппин.

– А-а, мĕншĕн пĕлÿ пухас килмест-ха санăн?

– Пичче, ÿссен эпĕ те сан пекех полицейски пуласшăн-иç. Пĕлетĕп: ку ĕçре патак тытма пĕлни те çитет.

## Вăхăтлăх черет

Районти ĕçе вырнаçтаракан центр умĕнче юр кĕлеткесем тăраççĕ. Камсем кулапалă-ши вĕсене? Е ача-пăча ашкăнса, е ĕç вырăнĕ кĕтекенсем ĕçсĕр аптăраса?

Урампа иккĕн иртсе пыраççĕ.

– Айтурух, юр кĕлеткисем те ĕç шыраççĕ кунта, – тĕлĕнет пĕри.

– Ку вăхăтлăх черет. Ăшă хĕвел пăхсанах вăл ирĕлсе пĕтет, – лăплантарать тепри.

## «Хĕрлĕ кĕнекере» – ĕнесем

Урокра.

– Мариванна, ĕнесене те «Хĕрлĕ кĕнекене» кĕртме вăхăт, – тет 5-мĕш класс ачи.

– Мĕншĕн апла шухăшлатăн, Вова?

– Асанне калана тăрăх, – ĕлĕк пирĕн ялта 300 ĕне пулнă. Халĕ 3 кăна... Эппин, пĕтсе пыракан чĕр чун йышне ĕнесене те кĕртмелле. Çитес çул кая юлма пултаратпăр.

**Н. ПЕТРОВ.**

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 29.04 | 30.04 |
|---|---|---|---|
| Температура, $^0$С | 2–4 сехетре | +7 | +6 |
| | 14–16 сехетре | +17 | +16 |
| Çумăр çăвать | | ☂ | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 747 | 741 |

## САЛАМЛАТПĂР!

Тĕнчери чи хаклă çыннăмăра, Тăвай районĕнчи Тушкилте пурăнакан **Любовь Петровна ПЕТРОВĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, ытам тулли телей, такăр кун-çул сунатпăр.



**Амăшĕ, мăшăрĕ, хĕрĕсем, кĕрÿшĕ, мăнукĕ.**


**РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРÿСЕМ**

**ПРОДАЮ**

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – **33** руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

**СДАЕМ В АРЕНДУ**

АУ «Издательский дом «Хыпар» предоставляет в аренду помещения на 6 и 7 этажах здания редакционно-издательского корпуса, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, д. 13 для использования под офис.

Со всеми вопросами обращаться в 616 каб. или звонить по тел. 8-967-478-06-12, 56-00-67.



«ХРЕСЧЕН САССИ» Обществăпа политика хаçачĕ Индекс 54838 Учредителĕ – ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – А.П. ЛЕОНТЬЕВ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)

Редакци адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru, e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305[1] регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă. Заказ 1540 Тираж 4427

* Рекламăпа пĕлтерÿсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерÿсемшĕн вĕсене паракансем явапла.